**И. А. Васильева, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи**
**Хуракассинчи вăтам шкулта вĕрентекен**

# Хусанкай пултарулăхне эсир пĕлетĕр-и?

7-мĕш класра ирттернĕ вăйă конкурс сценарийĕ

Сăн-сăпатна пăхатăп та -
Пушкин сăнĕ пек туйăнать мана.
Тĕсӳ-питӳ салху, сăмаху япшар,
Шăнкăрчă сасси пек илтĕнет хăлхана.
Арăслан пек малалла ыткăнатăн,
Пултарулăхна хытă шанатăн.
Хамăр çырулăх илемне курасшăн
Хĕрӳ вут-çулăмĕ пек çунатăн.

*Н.И. Полоруссов-Шелепи, чăваш халăх поэчĕ*

2007 çулхи кăрлачăн *22*-мĕшĕнче чăваш халăх сăвăçи çуралнăранпа 100 çул çитрĕ. Чаплă поэтăмăр чăваш литературинче те, культуринче те тарăн йĕр хăварчĕ. Вăл тăван чĕлхе хăватне шаннă, ăна тĕнче шайне çĕклеме ĕмĕтленнĕ. Унăн ĕмĕчĕсем пурнăçланнă. Митта Ваçлейĕ «Петĕр Хусанкай чăваш сăввин сассине Европа культурин çӳллĕшне çити çĕклерĕ» тесе палăртса хăварни чăннипех те çакна çирĕплетсе парать.

Хусанкай пултарулăхне чăваш литератури урокĕсенче кашни класрах тенĕ пек вĕренеççĕ. 7-мĕш класра тĕп вырăнта - унăн «Таня» поэми. Хамăн ĕç практикинче эпĕ çак темăна вĕреннĕ хыççăн ачасен пĕлĕвне çирĕплетмешкĕн вăйă конкурс ирттерессине йăлана кĕртнĕ. Тĕллевсем: Петĕр Хусанкай пурнăçĕн çул-йĕрне, «Таня» поэма содержанине аса илесси; ачасенче патриотизм, паттăрлăх туйăмне аталантарасси.

**Вăйă йĕрки**

Вăйă икĕ е виçĕ ушкăнпа иртет. Малтан пĕрремĕш ушкăн кăлтăрмач çавăрса ыйту суйлать, малалла - йĕркипе ыттисем. Енчен те пĕрремĕш ушкăнĕ ыйту çине хуравлаймарĕ пулсан çак ыйту çинех ыттисем хуравлама пултараççĕ. Кашни тĕрĕс хуравшăн ушкăн çăлтăр (е çаврашка) илет, вăйă вĕçĕнче вĕсене шутлаççĕ, çĕнтерӳçĕне палăртаççĕ.

**Ыйтусем:**

/. Хусанкай - поэтăн литературăри ячĕ. Унăн чăн хушамачĕ мĕнле? *(Казанков)*

*2.* Сăвăç ăçта çуралнă? *(Тутар Республикин Элкел районĕнчи Сиктĕрме ялĕнче)*

*3.* Петĕр Хусанкай хăçан çуралнă? *(1907 çулхи кăрлачăн 9(22)-мĕшĕнче)*

*4.* Петĕр Хусанкайăн малтанхи сăввисем хăçан, ăçта пичетленнĕ?

*(1924 çулта, «Сунтал» журналта)*

*5.* Петĕр Хусанкайăн пĕрремĕш сăвă кĕнеки хăçан, мĕнле ятпа тухнă? *(1928 ç., «Уяртсан»)*

*6.* Паттăр партизанка çинчен поэт мĕнле хайлав çырнă? *(«Таня» поэма)*

*7.* Чăваш халăх поэчĕ ятне хăçан панă? *(1950 ç.)*

8. Петĕр Хусанкайăн хăш произведенийĕсене пĕлетĕр?

*9.* Петĕр Хусанкай мĕнле премисем тата хăçан илме тивĕç пулнă? *(1967 ç. — Чăваш Республикин К.В.Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕ, 1969 ç. - Чăваш çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премийĕ)*

*10.* Петĕр Хусанкай хăш вырăс çыравçисен хайлавĕсене чăвашла ку-çарнă? *(А. Пушкин, В. Маяковский, А. Грибоедов хайлавĕсене)*

*11.* «Таня» поэма мĕнле юмахпа пуçланать? *(Хĕвелпипе Вупăр çинчен)*

*12.* Поэмăра хăш вырăс поэчĕн мĕнле сăмахĕсемпе усă курнă? *(М.Ю. Лермонтовăн «Атьсемĕр, хыçăмăр - Мускав-çке!» сăвă йĕркипе)*

*13.* Фронта кайнă чухне Зоя миçере пулнă? *(Вун çиччĕре)*

*14.* Зойăн юратнă поэчĕ кам пулнă? *(А.С. Пушкин)*

*15.* Зойăн шăллĕ мĕн ятлă? *(Шурик (Саша)*

*16.* Тыткăна лекнĕ Зойăна фашистсем камăн пӳртĕнче асаплантарнă? *(Кулик пиччепе Праски инке пӳртĕнче)*

*17.* Вилес умĕн Зоя халăха мĕн чĕнсе каланă? *(Кĕрешме, çĕнтерĕве шанма)*

*18.* Зоя нимĕç салтакĕсене мĕн тума чĕнсе каланă? *(Пăшалсене пăрахма, Совет çарĕ енне куçма)*

*19.* Поэмăра Зоя хăй вилĕмĕ пирки мĕн калать? *(«Вилмешкĕн эпĕ хăрамастăп, хам халăхшăн вилни - телей»)*

*20.* Поэмăра çак сăмахсене кам кама калать?

*а)* «Пул хăюллă, тӳрĕ чунлă». *(Амăшĕ - Зойăна)*

ă) «Е эп паттăр пулса килĕп каялла киле,

Е эп паттăр пулса вилĕп… Сывă пул! Пилле». *(Зоя - амăшне)*

б) «Илсемĕр, - терĕ, - отряда,

Пуласшăн эпĕ партизан». *(Зоя- партизан отрячĕн командирне)*

в) «Ĕненĕр: хам юлташсене

Тыттармăп эпĕ нихăçан...»

*(Зоя - партизан отрячĕн командирне)*

г) «Эс тăрăш хăвăн халăхушăн,

Ун ăраскалĕшĕн эс çун!» *(Зоя - шăллĕне)*

д) «Ну, мĕскер каласа парăн, Жанна д"Арк?» *(Нимĕç офицерĕ - Зойăна)*

е) «Ан ĕçтернĕ пул! Пăрах!

Е патак кирли?» *(Нимĕç салтакĕ - Кулик пиччене)*

ё) «Ме! Ĕçсе пăх кăраççын,

Кӳп шыв вырăнне!» *(Нимĕç салтакĕ - Зойăна)*

ĕ) «Ăçтисем пулатăн эс?..

Аçу-аннӳ пур-и сан?» *(Праски инке - Зойăна)*

ж) «Нумайййăн эпир. Мĕльюншарăн. Пире хисеплеççĕ ку чух». *(Зоя — нимĕç офицерне)*

з) «Пирте вăл тĕрĕслĕх, ăнланăр, Эпир, эпир çĕнтермелле». *(Зоя - нимĕç салтакĕсене)*

*34.* Поэмăра мĕнле ваттисен сăмахĕпе усă курнă? *(Уй куçлă, вăрман хăлхаллă)*

*35.* Мускав патĕнче çапăçусем пулнăранпа миçе çул çитет? *(65 çул)*

Васильева И. А. Хусанкай пултарулăхне эсир пĕлетĕр-и? : 7-мĕш класра ирттернĕ вăйă конкурс сценарийĕ / И. А. Васильева, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракассинчи вăтам шкулта вĕрентекен // Халăх шкулĕ=Народная школа. - 2007. - № 1. - С. 96.